

# ФЕДОР ПАВЛОВ

Чăвашсен паллă писателĕ тата композиторĕ Федор Павлович Павлов 1892 çулхи сентябрĕн 25-мĕшĕнче Чăваш АССРĕнче, Çĕрпӳ районĕнчи Патăръелĕнче, вăтам хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

1901 çулта ялти пуçламăш шкула çӳреме тытăннă, унта вĕреннĕ чухнех музыкăна юратма пуçланă. Унăн ашшĕ ялти юрлама тата ташлама чи ăста çынсенчен пĕри пулнă, халăх сăвви-юррисене кĕсле çинче калама юратнă. Ашшĕне кура ывăлĕ те ял-йышра çӳрекен юрăсене итлеме хăнăхнă.

1904—1907 çулсенче Ф. Павлов хальхи Шупашкар районĕнчи Иккассинчи икĕ класлă шкулта вĕреннĕ. Çак шкулта ун чухне революцие чун-чĕререн саламлакан Н. Ф. Беляевпа Ф. Н. Николаев (Сергеев) учительсем ĕçленĕ. Вĕсем хавхалантарнипе чылай ачасем революцие хапăл туса йышăннă, вĕсем хушшинче Ф. Павлов та пулнă.

1907 çулта Ф. Павлов Чĕмпĕрти чăваш шкулне вĕренме кĕнĕ. Унта вăл К. Ивановпа, Н. Шупуççыннипе çывăх туслашнă. Çак шкултан вĕренсе тухнă хыççăн кунтах 1911—1913 çулсенче пулас учительсене юрлама вĕрентсе пурăннă. Ф. Павлов виçĕ çул хушши Чĕмпĕрти духовнăй семинарире вĕреннĕ, ун хыççăн Вăрнар тата Етĕрне районĕсенчи ялсенче учитель пулса ĕçленĕ.

1917 çулхи август уйăхĕнче вăл Шупашкар уесĕнчи

мировой судья пулса ӗҫлеме пуҫланӑ, 1918 ҫулхи январь уйӑхӗнче Ф. Павлов «Канаш» хаҫат редакцийӗнче ӗҫлеме тытӑннӑ. Анчах вӑл унта нумай ӗҫлеймен, Шемшер вулӗҫтӑвкомӗ ӑна каллех вулӑсри халӑх судйи пулма суйласа лартнӑ. Ҫакӑнта 1919 ҫулхи май уйӑхӗччен ӗҫленӗ. Ун хыҫҫӑн Шупашкар уесӗнчи ҫутӗҫ пайне ӗҫлеме куҫнӑ. Ҫак вӑхӑтра вӑл «Канаш» хаҫатпа «Шурӑмпуҫ» журнална статьясем, фельетонсем тӑтӑшах ҫырса тӑнӑ, «Судра» комедине те чи малтан ҫав журналта пичетленӗ.

1919 ҫулхи кӗркунне ӑна Хусан кӗпӗрнинче ҫутӗҫ пайне чӗнсе илнӗ, унта шкулсене тӗрӗслекен инспектор пулса тӑнӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл Хусанти археологи институтӗнче вӗреннӗ.

1920 ҫулта Ф. Павлов каллех Шупашкара куҫнӑ, педагогика техникумӗпе музыка шкулӗнче, рабфакпа совпартшкулта чӑваш ҫамрӑкӗсене юрлама вӗрентнӗ. Чӑвашсен паллӑ композиторӗсемпе С. Максимовпа тата В. Воробьевпа пӗрле Чӑваш хорӗ йӗркеленӗ, музыка техникумӗ уҫас тӗлӗшпе нумай тӑрӑшнӑ.

1922 ҫулта Ф. Павловӑн «Ялта» ятлӑ драми пичетленсе тухнӑ. Ҫак произведенире драматург империализм вӑрҫи вӑхӑтӗнче чӑваш халӑхӗ тӳссе ирттернӗ асаплӑ кун-ҫула сӑнласа кӑтартнӑ. Ҫак драмӑри сӑнарсем пире ҫын телейӗпе ирӗклӗхне тӗп тӑвакан капитализм тӗнчине ылханса питлеме чӗнеҫҫӗ.

Ф. Павлов пултарулӑхӗ халӑх пурнӑҫӗпе, унӑн юрӑкӗвӗ пуянлӑхӗпе тачӑ ҫыхӑнса тӑрать. Чӑвашсен ӗлӗкхи тата хальхи юррисем — унӑн произведенийӗсен никӗсӗ. Композитор халӑх юррисене 300 яхӑн ҫырса илнӗ. Вӗсенчен чи лайӑххисене хорпа тата пӗччен юрлама илемлетнӗ. Вӑйӑ юррисенчен чылайӑшне композитор халӑх хушшинче ҫырса илнӗ («Олту», «Ким чечек», «Ҫырма хӗрне ансассӑн», «Ҫӗмӗрт ҫеҫки ҫурӑлать» т. ыт. те).

Унӑн совет саманине сӑнлакан юррисенче чӑваш музыкин нацилле уйрӑмлӑхӗ вӑйлӑн палӑрать. Вӗсенчен хӑшпӗрисене марш темипе, чӗрӗ те ҫивӗч ритмпа ҫырнӑ («Малалла утар», «Ҫӗнӗ улах юрри», «Ҫӗнӗ юрӑ»), теприсем лӑпкӑ юхӑмлӑ лирикӑллӑ юрӑ пек аталанаҫҫӗ («Колхоз юрри»), ыттисем вара такмак евӗр илтӗнеҫҫӗ («Ай, улми», «Ҫӗнӗ частушкӑсем»). Композитор пултарулӑхӗнче сатирӑллӑ юрӑсем те пур («Капкӑн чечетки», «Вӗҫкӗн»). Ф. Павлов симфони оркестрӗпе калама «Сӑрнайпа палнай» фантази ҫырнӑ.

Ф. Павлов чăваш музыкине наука енчен тĕпчес тĕлĕшпе те нумай тăрăшнă. Ку енĕпе унăн пултарулăхĕнче çак статьясем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ: «Чăваш музыки» (1922), «Хитре», «Тăпачă юрри» (1923), «Чăваш кĕсли», «Çырмари юрă» (1928), «Чăваш музыкин çухалнă тĕпĕ-йĕрĕсене шыраса» (1929).

«Савнă хĕр», «Вĕлле хурчĕ», «Шет хитре хĕр», «Йăсăркка» (1912) сăвăсем тата «Ишекелле», «Кам?» (1919), «Вакат» (1924), «Аслă шăшисем» (1925) фельетонсем те писатель пултарулăхне нумай пуянлатаççĕ.

Ф. Павлов 1930 çулта Государствăн Ленинградри Н. А. Римский-Корсаков ячĕпе хисепленекен консерваторине вĕренме кайнă. Вăл туберкулезпа йывăр чирленĕ хыççăн 1931 çулхи июнĕн 2-мĕшĕнче Сочири санаторире вилсе кайнă, ăна Сочи хулинчи масар çине пытарнă.

Ф. Павловăн çакăн пек кĕнекесем тухнă: «Ача-пăча сасси» (1921), «Ялта» (драма, 1922 тата 1938), «Сăрнай» (чăваш юррисем, 1924), «Çĕн сăрнай» (С. Максимовпа тата В. Воробьевпа пĕрле хатĕрленĕ, 1931), «Ялта», «Судра» (пьесăсем, 1934), «Марш, вперед, Красная Чувашия» (партитура, 1935), «Сочиненисем» (1941), «Çырнисен пуххи» (пĕрремĕш том, кĕнекери произведенисене вырăсла та куçарнă, 1962). Ф. Павлов 1926 çулта Шупашкарта «Чуваши и их песенное и музыкальное творчество» ятлă вырăсла кĕнеке кăларнă.

Ф. Павлов пултарулăхне тишкерсе çырнă статьясенчен çаксене палăртма юрать: П. Парамонов — «Юрăсен кĕнеки çинчен» («Сунтал», 4 №, 1929), А. Золотов — «Ф. Павлов пултарулăхĕ» («Сунтал», 7—8 №, 1931), В. Ваçанкка — «Ф. П. Павлов пурнăçĕпе пултарулăхĕ» («Сунтал», 9 №, 1931), Е. Захаров — «Ф. П. Павлов» («Чăвашсен илемлĕ литератури» кĕнекере, 1934), Н. Ваçанкка—«Ф. П. Павлов. Пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен». («Илемлĕ литература», 6 №, 1941), А. Эсхель — «Ф. П. Павлов» («Ялав», 6 №, 1946), И. Саламбек — «Ф. П. Павловăн пичетленмен сăввисем» («Ялав», 7—8 №, 1946), В. Долгов — «Чăваш искусствин паллă деятелĕ» («Ялав», 6 №, 1951), П. Хусанкай — «Тĕлпулусем, Павăл Хĕветĕрĕ композитор çинчен» («Асталăхпа чăнлăх» кĕнекере, 1964), А. Артемьев — «Хунавлах хăрнисем» («Çунатлă çуралнисем» кĕнекере, 1965).

Композитор пултарулăхне тĕпчесе, юлашки çулсенче Ю. Илюхин искусствовед нумай çырчĕ; унăн паллăрах

статйисем: «Чăваш халăх искусствин мухтавĕпе чапĕ» («Коммунизм ялавĕ», 1956, июнĕн 2-мĕшĕ), «Ĕмĕр асăнмалăх» («Ялав», 11 №, 1957), «Хăватлă талант» («Коммунизм ялавĕ», 1962, сентябрĕн 25-мĕшĕ), «Ф. П. Павлов» («Ялав», 9 №, 1962), «Ф. П. Павлов» («Чăваш календарĕ, 1967»), «Музыкальная культура Чувашии» кĕнекере (1961), «Певец народа» («Советская Чувашия», 1956, июнĕн 2-мĕшĕ), «Пример служения родному народу» («Советская Чувашия», 1962, сентябрĕн 25-мĕшĕ), «Ф. П. Павлов» («Чăваш календарĕ, 1967»), «Тăван халăх телейĕшĕн» (Коммунизм ялавĕ», 1967, сентябрĕн 24-мĕшĕ).

Ф. Павлов чăваш музыкине аталантарас тĕлĕшпе нумай тăрăшнине Ф. Лукин композитор çырнă çак статьясем те лайăх кăтартса параççĕ: «Федор Павлович» (ЧНТИ кăларакан ученăй запискăсен V кĕнеки, 1950), «Композитор Ф. П. Павлов» («Советская Чувашия», 1951, июнĕн 20-мĕшĕ), «Ф. П. Павлов» («Советская музыка», 7 №, 1951), «Певец народа» («Молодой коммунист», 1956, июнĕн 3-мĕшĕ), Н. Павлов — «Талантливый труженик чувашской культуры» («Советская Чувашия», 1967, сентябрĕн 24-мĕшĕ).

М. Сироткинăн «Очерк истории чувашской советской литературы» тата «Чувашский фольклор» кĕнекисенче те, Ф. Павлов произведенийĕсен пĕрремĕш томĕ валли Ю. Илюхинпа Н. Павлов доцент çырнă «Федор Павлов» ятлă критикăпа библиографи очеркĕнче те, Н. Павловăн «Проблема конфликта в чувашской драматургии» кĕнекинче те драматург пултарулăхĕ çинчен тĕплĕн каласа кăтартнă.